27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
14
ЭРНЕКУН
74(6569) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔ ХАСАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЕРЕМЕНКĂНА

ПРИМОРСКИ Уйрăм Арми çарĕсем тăшманăн Ак-Монай позицийĕсен çинчи оборонине татса, паян, апрелĕн 13-мĕшĕнче ФЕОДОСИЯ хулипе Хура тинĕс çинчи портне—тăшман оборонин Крымăн кăнтăр-хĕвелтухăç çыранĕнчи тĕреклетнĕ пысăк пункне — туртса илнĕ.

ФЕОДОСИЯ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ПРОВАЛОВ генерал-майорăн, КОЛДУБОВ генерал-майорăн, ГОРБАЧЕВ генерал-майорăн, ПРЕОБРАЖЕНСКИЙ полковникăн, ВАСИЛЕНКО полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-майорĕн ДЕГТЯРЕВАН, КАЛИНИН полковникăн, ДЮРБА полковникăн, МОРОЗОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; ДЕРГУНОВ полковникăн, РУДАКОВ полковникăн, СОЙЧЕНКО майорăн, МАЛЫШЕВ майорăн танкисчĕсем; инженерла çарсен генерал-майорĕн ПИЛИПЕЦАН сапёрĕсем тата авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЕРМАЧЕНКАН летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас шутпа, ФЕОДОСИЯ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе частьсене «ФЕОДОСИЙСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 13-мĕшĕнче, 20 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, ФЕОДОСИЯ хулине туртса илнĕ ПРИМОРСКИ Уйрăм Армин паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ФЕОДОСИЯ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ТОЛБУХИНА

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, çаплах ăнăçлă наступлени туса пырса, паян, апрелĕн 13-мĕшĕнче, танковăй соединенисемпе пехота хăюллă пырса çапнине пула, ЕВПАТОРИЯ хулипе Хура тинĕс çинчи портне, нимĕçсен оборонин Крымăн хĕвеланăç çыранĕнчи тĕреклетнĕ паха пунктне — туртса илнĕ.

ЕВПАТОРИЯ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ЗАХАРОВ генерал-лейтенантăн, ЧАНЧИБАДЗЕ генерал-лейтенантăн, ЦАЛИКОВ генерал-майорăн, ПУЗАНОВ подполковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн СТРЕЛЬБИЦКИН, МОРГУНОВ майорăн, ЧИЖИКОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн ЮДИНĂН танкисчĕсем тата авиаци генерал-майорĕн КУЗНЕЦОВĂН, ЧУЧЧЕВ полковникăн летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас шутпа, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ЕВПАТОРИЙСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 13-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, ЕВПАТОРИЯ хулине ирĕке кăларнă УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ЕВПАТОРИЯ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ТОЛБУХИНА

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, паян, апрелĕн 13-мĕшĕнче, танковăй соединенисемпе пехота вирлĕн атакăланине пула, Крымăн столицине — СИМФЕРОПОЛЬ хулине—туртса илнĕ. СИМФЕРОПОЛЬ хули вăл тăшман оборонин тĕреклетнĕ тĕп пункчĕ пулнă, вăл Крым çурутравĕн кăнтăр çыранĕнчи порчĕсем патне пымалли çулсене пӳлсе тăнă.

СИМФЕРОПОЛЬ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче КРЕЙЗЕР генерал-лейтенантăн, РАЗУВАЕВ генерал-майорăн, КОШЕВОЙ генерал-майорăн, ПОТАПЕНКО генерал-майорăн, БОБРАКОВ генерал-майорăн, РОДИОНОВ полковникăн çарĕсем; СОЛОВЬЕВ полковникăн, ПОЦЕЛУЕВ полковникăн, ФЕЩЕНКО полковникăн, ЖИДКОВ полковникăн, АРХИПОВ подполковникăн, ХРОМЧЕНКО подполковникăн, ХРАПОВИЦКИЙ подполковникăн, НЕДЕЛЬКО майорăн танкисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн ТЕЛЕГИНĂН, КАПЛАНОВ полковникăн, ВАСИЛЕНКО полковникăн, ПАВЛОВ полковникăн, КАЛЬНИЧЕНКО полковникăн, ЯРОМЕНКО подполковникăн, МОЦИЕВСКИЙ подполковникăн, ВЛАСЕНКО подполковникăн артиллерисчĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВĂН, ОБАНИЧЕВ полковникăн связисчĕсем; ПАВЛОВ полковникăн, СЫЧЕВ майорăн сапёрĕсем тата авиаци генерал-майорĕн САВИЦКИН, ГЕЙБО полковникăн, КАРЯКИН полковникăн, ПРУТКОВ полковникăн, СИТКИН полковникăн летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас шутпа, СИМФЕРОПОЛЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «СИМФЕРОПОЛЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 13-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, СИМФЕРОПОЛЬ хулине туртса илнĕ УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, СИМФЕРОПОЛЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕ.

ВЦСПС-па пĕр промышленность Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр промышленность Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1944 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода иккĕмĕш премии памалла тунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 11-мĕшĕнче пирĕн çарсем СКАЛА хулинчен хĕвеланăçнерехра тăшманăн çавăрса илнĕ çарĕсен группировкине пулăшма пыракан йышлă пехотипе танкĕсен атакисене сирсе-сирсе янă. Хăйĕн çынĕсемпе техникине темĕн чухлех пĕтерсе çапăçса, тăшман БУЧАЧ хулине йышăннă, вара вăл сав районра хăйĕн çавăрса илнĕ группировкипе пĕрлешнĕ.

Румынире БОТОШАНИ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем СЕРЕТ шывĕ урлă каçнă та ПАШКАНИ хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса РОТУНДА, КОНЦЕШТЬ, КРИСТЕШТИЙ, ТОПИЛЕ, ГЭШТЕШТЬ ялĕсене тата ЛЕСПЕЗИ, КРИСТЕШТИЙ чугун çул станцийĕсене йышăннă. КРИСТЕШТИЙ чугун çул станцийĕнче пирĕн çарсем 6 паровоз тата 400 вагона çити тытса илнĕ.

ЯССЫ хули енче пирĕн çарсем, тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сирсе-сирсе ярса, çаплах малалла тапăнса пынă, темиçе ял туртса илнĕ.

КИШИНЕВ хули енче пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, 30 ял ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — ГАРТОП, ГЛИННОЕ, КАРМАНОВО, ПАВЛОВКА, ШИБКА, КОМАРОВКА, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА.

ТИРАСПОЛЬ хули енче пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Молдаван ССР-ĕн СЛОБОДЗЕЯ МОЛДАВАНСКАЯ ятлă район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — КАССЕЛЬ, ПЛОСКОЕ, СЛАВЯНОСЕРБКА, ГРЕБЕНИКИ, КОНСТАНТИНОВКА, ВЛАДИМИРОВКА, БЛИЖНИЙ ХУТОР, СУКЛЕЯ, КАРАГАШ, СЛОБОДЗЕЯ РУССКАЯ, ЧУБРУЧИ, ГЛИННОЕ, КОРОТНОЕ, НИЖНЕВЕРТАЕВКА ятлă пысăк ялсем тата НОВО-САВИЦКАЯ чугун çул станцийĕ. Пирĕн çарсем ТИРАСПОЛЬ хули патне таччăнах çитсе тухнă та тăшманпа хула тулашĕнче çапăçма тытăннă.

ОДЕССА хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, ГРОСС-ЛИБЕНТАЛЬ, КЛЕЙН-ЛИБЕНТАЛЬ, ДЕРИБАСОВКА, СРЕДНИЙ ФОНТАН, БОЛЬШОЙ ФОНТАН ялĕсене тытса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, наступление çаплах вăйлатса пырса, Крымăн ДЖАНКОЙ хулипе паха чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — МОНАСТЫРКА, БАЙСАРЫ, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА, БОЛЬШАЯ МАГАЗИНКА, НОВО-ИВАНОВКА, ЛЕККЕРТ, ДАТАРКОЙ, ВЛАДИМИРОВКА, ТЮЙ-ТЕБЕ, ДЖАНАЙ, 21-мĕш участок ялĕсем тата ЧУРИК, БОГЕМКА чугун çул станцийĕсем. Çавăн пекех пирĕн çарсем тăшмантан ЧОНГАР çурутравне пĕтĕмĕшпех тасатнă, ЧЕНЬ-ТРЕНЬ, ЧОНГАР, МАРЬЯНОВКА, ВАСИЛЬЕВКА, ЕКАТЕРИНОВКА ялĕсене тата ДЖИМБУЛУК, ЧОНГАР чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

ПРИМОРСКИ Уйрăм Армийĕн çарĕсем, наступление куçса, тăшманăн КЕРЧЬ çурутравĕ çинчи вăйлă тĕреклетнĕ оборонине татнă та апрелĕн 11-мĕшĕнче Крымăн хĕвелтухăç çыранĕнче нимĕçсен оборонин питех те паха тĕреклетнĕ пунктне—КЕРЧЬ хулипе крепоçне туртса илнĕ. Наступление вăйлатса пырса, пирĕн çарсем КЕРЧЬ хулинчен 30 километр таран хĕвеланăçнелле куçнă, ТУРЕЦКИЙ ВАЛ урлă каçнă та тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — КАТЕРЛЕН, МАМА-РУССКАЯ, БОЛЬШОЙ БАБЧИК, ТРУД КРЕСТЬЯНИНА, ЧУРБАШ, МЫСЫРЬ, ДЖАЙЛАВ, ЧИСТОПОЛЬЕ, КОШ-КУЮ, МИХАЙЛОВКА, АЙМАН-КУЮ, МАЯК-САЛЫН, АДЖЫЗЛИ, СУЛТАНОВКА, САРАЙМИН ятлă пысăк ялсем тата БАГЕРОВО, САЛЫН ятлă чугун çул станцийĕсем. Каялла чакакан тăшмана пыра-пыра çапса, пирĕн çарсем ăна çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кӳреççĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Апрелĕн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 93 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 61 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЛЬВОВ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ТАПĂННИ

Апрелĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Львов чугун çул узелне тапăннă, çав чугун çул узелĕнче тăракан тăшманăн çар эшелонĕсем капланса тăнă вырăнсем çине бомбăсем пăрахнă. Пушарсем нумай тухнă — çар хатĕрĕсем тиесе лартнă вагонсемпе платформăсем, çавăн пекех тата тăшманăн çар склачĕсем çуннă. Пуринчен те вăйлăрах пушарсем Львов-главная чугун çул станцийĕнче пулнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

АПРЕЛĔН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем СКАЛА хулинчен хĕвеланăçнерехре, тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сирсе-сирсе ярса, малалла тапăнса пынă, темиçе ял туртса илнĕ. Апрелĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем СКАЛА хулинчен хĕвеланăçнерехре çавăрса илнĕ нимĕçсен группировкине çакăн пек йывăр çухатусем кӳнĕ: 187 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă, тĕрлĕ калибрлă 121 тупă, 61 самолет, 7.483 автомашина тытса илнĕ. 6.988 нимĕçе тытнăна илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 26.000 вилли ытла выртса юлнă. Апрелĕн 11-мĕшĕ тĕлне тăшманăн çав çавăрса илнĕ группировкинчен 6 пехотнăй, 7 танковăй тата пĕр моторизированнăй дивизирен пуçтарнă отрядсем кăна тăрса юлнă. Çав отрядсенче мĕн пурĕ те 10.000 салтака çити тата 80 танка çити кăна тăрать.

Румынире, БОТОШАНИ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, ФЭЛТИЧЕНИ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта йышăннă. Вăл шутра — БРАЖЕШТЕ, РЭДЭШАНЬ, БАЯ, ДУМБРЭВИЦА ятлă пысăк ялсем.

КИШИНЕВ хули енче пирĕн çарсем Молдаван ССР-ĕн район центрĕсене — ДУБОССАРЫ хулипе ГРИГОРИОПОЛЬ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ДОМНИЙ, ПЯТРА, ТРЕБУШЕНЬ, МАРКАУЦЬ, МАЛОВАТОЕ, КУЧЕЕР, КОРЖЕВО, ЛУНГА, ТАШЛЫК, БУТОР, СПЕЯ, ТОКМОДЗЕЯ, МАЛАЕШТЫ, КРАСНАЯ ГОРКА, ПАРКАНЫ, ТЕРНОВКА ятлă пысăк ялсем.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем çĕрле ТИРАСПОЛЬ хулине — нимĕçсен ДНЕСТР çинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне — штурмласа туртса илнĕ.

ОДЕССА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă, КАЛАГЛЕЯ, АЛЕКСАНДРОВКА, БУРЛАЧЬЯ БАЛКА, ЛЮСТДОРФ, ИЛЬИЧЕВКА ялĕсене тата АККАРЖА чугун çул станцине туртса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем тăшманăн ИШУНЬРИ вăйлă çирĕплетнĕ позицийĕсене татнă та, каялла чакакан тăшманăн çарĕсене хăваласа пырса, халăх пурăнакан 150 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра Крымăн район центрĕсем—КОЛАЙ, КУРМАН-КЕМЕЛЬЧИ, БИЮК-ОНЛАР, КАРАЧА-КАНДИВ (СИМФЕРОПОЛЬ хулинчен 18 километр çурçĕртерехре), тата СЕЙТЛЕР; пысăк ялсем — КРАСНО-ПЕРЕКОПСК, ИШУНЬ, ВОРОНЦОВКА, ВОИНКА, ДОЛИНКА, КУЛЛАР-КИРЧАК, АЙГАШЕН, КАЛИНИНДОРФ, ВЕСЕЛОЕ; чугун çул станцийĕсем — ПЯТИОЗЕРНАЯ, ЮШУНЬ, ВОИНКА, КАРАНКУТ, КОЛАЙ, СЕЙТЛЕР, КУРМАН-КЕМЕЛЬЧИ, ТАШЛЫК ДАЙР, БИЮК-ОНЛАР. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсет.

ФЕОДОСИЯ хули енче пирĕн çарсем, васкаса каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, КЕРЧЬ çурутравне тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă, АКМОНАЙ позицийĕсенчен иртсе кайнă. Наступлени туса пырса, пирĕн çарсем халăх пурăнакан 140 пункта ытла ирĕке кăларнă. Вăл шутра — Крымри СЕМЬ КОЛОДЕЗЕЙ ятлă район центрĕ, НОВО-НИКОЛАЕВКА, МАРФОВКА, МАРЬЕВКА, ЛЕНИНСК, КИТЕНЬ РУССКИЙ, АК-МОНАЙ, АРМА-ЭЛИ ятлă пысăк ялсем тата ТАШЛЫЯР, ОЙСУЛ, СЕМЬ КОЛОДЕЗЕЙ, АЛИБАЙ, АК-МОНАЙ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем тăшманăн 2.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ, хальхи вĕсене шута илеççĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 3.000 вилли ытла выртса юлнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Апрелĕн 11-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 132 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 47 самолетне персе ӳкернĕ

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ КОНСТАНЦА ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

Апрелĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиацин пысăк вăйĕсем Констанца хулин (Румыни) çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Совет самолечĕсем порт çине, чугун çул узелĕ çине тата Констанцăри нефть хули çине бомбăсем пăрахнă. Вăйлă пушарсем тухнă, взрывсем пулнă. Портăн пысăк пайне вут хыпса илнĕ. Нефть хули территорийĕнче темиçе тĕлте пушар тухнă, хура çăра тĕтĕм явăннă, вăйлă взрывсем пулнă.

Арми генералĕ Ф. И. ТОЛБУХИН.

Иосиф Сталин Маршала

Çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çар, унпа пĕрле Чехословаки Бригади те, пирĕн республикăн чиккине çитнĕ вăхăтра эпĕ Сире — Верховный Главнокомандующие тата Совет Союзĕнчи халăхсен представительне—хамăр халăх ячĕпе, Чехословаки правительстви ячĕпе тата хам ятпа чунтан чĕререн саламлатăп.

Хĕрлĕ Çар, паян пирĕн çĕр çине ярса пусса, пирĕн пĕрлехи тăшмана тепĕр хут хытă çĕнтерет, пирĕн халăха ирĕклĕх парать тата малашне телейлĕ те хăрушсăрлăхра пурăнма шанчăк кӳрет. Çак историллĕ минутра эпĕ пирĕн икĕ çĕршывăн иртнĕ вăхăтри туслăхне çеç аса илместĕп (эпĕ ăна юлашки хутĕнче Мускава кайсан çĕнĕ договор туса ала пусса çирĕплетрĕм), эпĕ ытти союзниксемпе пĕрле тата хамăрăн икĕ государствăна ырă тăвасшăн пулса Европăра мир туса хурас ĕçре эпир малашне пĕрле килĕштерсе ĕçлесси çинчен шухăшласа та савăнатăп. Эпир пĕрле йывăрлăхсем тӳссе ирттерни тата эпир халĕхи вăхăтра пĕрле кĕрешни пирĕн союз паян та, пĕтĕм пулас вăхăтра та çавăн пекех юлассине шантарса парать.

Чехословаки салтакĕсемпе пĕрле пирĕн хаклă тăван çĕршыва килсе кĕрекен Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене хĕрӳллĕн тата тав туса саламлатпăр.

Доктор ЭДУАРД БЕНЕШ.

Лондон

Эдуард Бенеш господина, Чехословаки республикин президентне

Хĕрлĕ Çар çитĕнӳсем тунă май тата совет çарĕсем Чехословаки чиккине пырса тухнă май тăванла саламланăшăн эпĕ Сире тав тăватăп. Çакăн пирки эпĕ иккĕленместĕп: пирĕн халăхсем пĕрлехи тăшмана хирĕç пĕр-пĕринпе пĕрлешсе кĕрешни сывăх вăхăтрах Чехословаки Республикине çĕнĕрен ирĕклĕ те никама пăхăнман республика туса хурĕ.

И. СТАЛИН.

Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕн çар миссийĕ Мускава килнĕ

Апрелĕн 12-мĕшĕнче Мускава Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕн çар миссийĕ килнĕ. Çав мисси пуçĕнче Велемир Терзич генерал-лейтенант тăрать. Аэродромра миссие çаксем кĕтсе илнĕ: Хĕрлĕ Çарăн генеральнăй штабĕн представителĕ Н. В. Славин генерал-майор, Оборона Халăх Комиссариачĕн тулашри çыхăнусен отделĕн начальникĕ В. Н. Евстигнеев генерал-майор, Моссовет председателĕн заместителĕ М. А. Яснов юлташ, Мускав хули коменданчĕн заместителĕ М. В. Гребенщиков полковник, мĕнпур славянсен комитечĕн председателĕ А. С. Гундоров генерал-лейтенант, Югославин общество деятелĕсем В. Масларич, В. Влахович, С. Симыч господин, М. Лозич полковник, Югославсен Совет Союзĕнчи çар чаçĕн командирĕ М. Месич подполковник тата ыттисем те.

Совет Союзĕн правительствипе Итали правительстви пĕр-пĕрин патне хăйсен представителĕсене яни

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн правительстви Итали правительстви çумĕнче хăйĕн представителĕ пулса ĕçлеме М. А. Костылева лартнă. М. А. Костылев унччен Итали ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлесе тăракан Консультаци советĕнчи Совет представителĕ çумĕнче эксперт пулса ĕçленĕ. М. А. Костылев хăйсен çĕнĕ вырăнти ĕçĕсене тума тытăннă ĕнтĕ.

Итали правительстви хăйсенчен Совет Союзĕн правительстви çумĕнче хăйĕн представителĕ пулса ĕçлеме Пиетро Кварони господина лартнă. Пиетро Кварони унччен Кабулра Итали посланникĕ пулса ĕçленĕ. Пиетро Кварони господин çак çитес кунсенчех Мускава килме тухать.

Пирĕн земляк К. М. Антонов— Совет Союзĕн Геройĕ

Чăваш халăхĕн нумай пин ывăлĕсем Аслă отечественнăй вăрçă фрончĕсенче хамăрăн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн хастарлăн кĕрешеççĕ. Совет правительстви чăваш халăхĕн нумай ывăлĕсене орденсемпе медальсем парса наградăланă, темиçе паттăра Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Тăван халăх пирĕн земляк — гвардин кĕçĕн лейтенанчĕ Константин Михайлович Антонов юлташ Совет Союз Геройĕсен ретне тăни çинчен килнĕ хыпара тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕ. СССР Верховный Совет Президиумĕ 1944 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх, гвардин кĕçĕн лейтенантне Константин Михайлович Антонов юлташа Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Константин Михайлович Антонов Комсомольски районри Луцково ялĕнче ӳссе çитĕннĕ. Вăл 1938 çулта комсомола кĕнĕ. 1941 çулта Комсомольскри вăтам шкултан вĕренсе тухнă та Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. Çавăнтанпа Антонов юлташ халăх телейлĕхĕшĕн хăйĕн вăй-хăватне шеллемесĕр кĕрешет.

Антонов юлташăн ашшĕ-амăшĕсем халĕ те Луцково ялĕнчех пурăнаççĕ. Унăн йăмăкĕпе шăллĕ те Хĕрлĕ Çар ретĕнче, тепĕр шăллĕ ФЗО шкулĕнче вĕренет.

Нумай пулмасть Совет Союзĕн Геройĕ Константин Антонов вĕреннĕ вăтам шкулта митинг пулса иртрĕ.

Чыс та мухтав хамăрăн земляка — Совет Союзĕн Геройне Константин Михайлович Антонов юлташа!

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Çак кунсенче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн черетлĕ VIII-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум 1944 çулхи пĕрремĕш кварталта парти ретне илнин итогĕсем çинчен (докладчикĕ Шаронова юлташ) тата хулан пурăнмалли çуртйĕрĕсемпе коммуналлă хуçалăх строительстви тата хулана юсаса илемлетмелли ĕçсен 1944 çулхи планĕ çинчен (докладчикĕ Аникин юлташ) сÿтсе-яврĕ.

1944 çулăн пĕррехмĕш кварталĕнче хула парторганизацийĕ хăйĕн ретне çĕнĕрен 156 çынна илнĕ. Вăл шутра члена 64 çынна, кандидата 92 çынна илнĕ. Уйрăм предприятисемпе учреждениесенчи пуçламĕш парторганизацисем иртнĕ виçĕ уйăх хушшинче рабочисемпе служащисем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăхлатрĕç, малта пыракан ĕçсыннисене парти ретне илес ĕçе вăйлатрĕç. Парти ретне тăван çĕршывăн тĕреклĕхне ÿстерес, фронтра çĕнтерÿ тума пулăшас ĕçре пĕтĕм вăй-хала парса ĕçлекен çынсене илнĕ.

Анчах парти ретне илес ĕçре партин Шупашкар хулинчи организацийĕнче ситменлĕхсем те нумай. Çакă вăл хуларн хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем парти ретне илес ĕçе куллен, тимлĕн туса пыманнинчен, ĕçсыннисем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе кирлĕ пек туса пыманнинчен килнĕ. Госпланри, хула милицийĕнчи, суту-илÿ Наркоматĕнчи, коммуналлă хуçалăх Наркоматĕнчи, Чăвашсоюзри пуçламĕш парторганизацисем масса хушшинче ситилĕксĕр ĕçленĕ. Вĕсем юлашки виçĕ уйăх хушшинче парти ретне мĕн пурĕ те пĕрер çынна çеç илнĕ. Хулари 44 пуçламĕш парторганизаци пĕррехмĕш кварталта пачах та ÿсмен.

Хула парторганизацийĕн парти ретне çĕнĕ çынсене илес ĕçри пысăк ситменлĕхĕ вăл — парти речĕ рабочисем шучĕпе ситилĕксĕр ÿссе пыни пулса тăрать. 1944 çулăн пĕррехмĕш кварталĕнче парти ретне илнисен шутĕнче рабочисем мĕн пурĕ те 33 процент çеç. Парти ретне предприятисемпе фабрикăсенчи тĕп ĕçе туса пыракансене сахал илнĕ. Тĕслĕхрен, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри парторганизаци, заводра рабочисем йышлăн пулсан та, виçĕ уйăх хушшинче парти ретне 18 çынна анчах илнĕ, çак шутра рабочисем 3 çын çеç. Çавăн пекех тепĕр заводри парторганизаци те иртнĕ кварталта парти ретне 10 рабочие çеç илнĕ.

Рабочисене парти ретне ситилĕксĕр илнин сăлтавĕ çакăнта: предприятисенчи парторганизацисен бюровĕсем, цехсенчи пуçламĕш парторганизацисем хăйсем тавра рабочи-активистсене пĕтĕçтерес, вĕсемпе куллен ĕçлес ĕçе ситилĕксĕр туса пыраççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра цехсенчи пуçламĕш парторганизацисенчен 8-шĕ пĕррехмĕш кварталта парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе вуçех те ĕçлемен.

Партин промышленность предприятийĕсенчи организацийĕсен рабочисене куллен вĕрентсе пымалла, тÿрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлесе малта пыракан рабочисене хăйсем тавра çирĕппĕх пĕтĕçтермелле, вĕсене коммунистсен уçă пухăвĕсене чĕнмелле, обществăллă ĕçе активлăн хутшăнтармалла, малта пыракан рабочисене парти ретне хăюллăн суйласа илмелле.

1944 çулхи пĕррехмĕш кварталта, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, парти ретне инженерсемпе техниксене ытларах илнĕ. Виçĕ уйăх хушшинче парти ретне 121 служащие йышăннă, çав шутра инженерла-техникла работниксем 28 çын. Анчах çакна та ситилĕклĕ теме çук-ха. Пирĕн хулари предприятисемпе фабрикăсенче инженерсемпе техниксен йышĕ пысăк. Парти речĕ çавăн пекех преподавательсемпе врачсен хисепĕнчен те сахал ÿснĕ.

Большевиксен партийĕн ретне куллен ÿстерсе пымалли тĕп резерв вăл — комсомол. 1-мĕш кварталта комсомолецсенчен парти ретне 53 çынна кăна илнĕ. Хула парторганизацийĕ, паллах, комсомолецсене хăйĕн ретне ытларах йышăнма пултарнă. Анчах пирĕн хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем комсомол организацийĕсен ĕçне çĕклессишĕн кирлĕ пек ĕçлемеççĕ, комсомол активне воспитани парас тĕлĕшпе те ситилĕклĕ ĕçлемен.

Пленум чылай пуçламĕш парторганизацисенче уçă пухусем сахал ирттернине, пухусене тĕплĕн хатĕрленмесĕр иртгернине пысăк ситменлĕх тесе палăртрĕ.

Шаронова юлташăн докладĕ тăрăх пренире Ардаматский (Н-ски заводри партбюро секретарĕн заместителĕ), Страхов (Н-ски завод строительствин цехри парторганизацин секретарĕ), ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Ислюков тата ытти юлташсем те — пурĕ 7 çын тухса каларĕç.

Пленум пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене парти ретне илес ĕçе вăйлатма, ку ĕçри ситменлĕхсене хăвăрт пĕтерме, хулари мĕнпур коммунистсене парти ретне ÿстерсе пынă çĕре активлăн явăçтарма, парти организацисем тавра ĕçсыннисен малта пыракан массине тата çирĕппĕх пĕтĕçтерессишĕн тимлĕн ĕçлеме хушрĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа Шупашкар хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ доклад туса пачĕ.

Хулари çуртйĕрсене, урамсене кĕпересене тата ыттисене те юсаса илемлетес ĕçе валли Шупашкар хула совечĕн исполкомне правительство 616,6 пин тенкĕ, иртнĕ çулхинчен 53 процент ытларах, укçа уйăрса панă. Кунсăр пуçне хула совечĕн исполкомĕ кăçал пурăнмалли çуртйĕрсене юсама 180 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Çав укçапа хулари электростанцие, мунчана тата ытти коммуналлă предприятисене юсама йышăннă. Çак ĕçсене вăхăтра та организованно туса иртгерме хула совет исполкомĕн саврăнăçуллăрах ĕçлес пулать.

Пурăнмалли çуртйĕрсене, коммуналлă хуçалăх предприятийĕсене тата хулана юсаса илемлетес ĕçсен 1944 çулти планĕ пысăк. Ăна тĕплĕн те вăхăтра пурнăçа кĕртесси чи малтанах хула совет исполкомĕпе ВКП(б) хула комитечĕ, партин хулари пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсем, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем ĕçсыннисен массине çак ĕçсене тума лайăх мобилизацилеме пултарнинчен килет.

Пренире Канатов, Арзамасова (Горздрав), Кунаков (Горплан), Бугаев (хула совет исполком председателĕн заместителĕ), Варфоломеев (электростанци директорĕ), Калашников (милици управленийĕн начальникĕ) тухса каларĕç.

Пленумра ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн пĕррехмĕш секретарĕ Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ. Чарыков юлташ пленумăн кун йĕркинчи ыйтусем çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ, çирĕп кăтартусем пачĕ.

Пленум хулан пурăнмалли çуртйĕрĕсемпе коммуналлă хуçалăх строительствин тата хулана юсаса илемлетмелли ĕçсен 1944 çулхи планне пурнăçа кĕртмелли майсене палăртса решени йышăнчĕ.

Пленумра ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташпа пирĕн земляк Совет Союзĕн Геройĕ Сапожников юлташ пулчĕç.

РЕСПУБЛИКАРИ КОЛХОЗСЕМ АПРЕЛĔН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ ÇУРАКИНЕ МĔНЛЕ ХАТĔРЛЕННИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Тырă вĕрлăхĕ хывнă	Вĕрлăх сортланă	Клевер вăрлăхĕ хывнă	Çĕрулми вĕрлăхĕ хывнă	Тислĕк кăларнă
Улатăр	82,8	80,6	23,8	41,0	57,8
Элĕк	100,9	100,0	70,8	93,5	76,3
Çĕрнар	110,6	100,0	70,9	87,7	101,6
Йĕпреç	103,9	97,3	59,5	77,8	32,1
Ишлей	[illegible]	100,0	70,0	99,0	59,7
Калинино	98,6	100,0	41,6	85,4	70,9
Канаш	[illegible]	100,0	32,4	57,0	61,6
Куславкка	98,1	100,0	34,7	100,0	49,7
Комсомольски	99,7	100,0	28,1	53,4	75,5
Красноармейски	97,1	100,0	51,2	93,7	63,9
Хĕрлĕ Чутай	100,1	100,0	59,2	76,3	60,3
Кувакино	86,6	89,0	5,0	23,3	55,5
Сĕнтĕрвăрри	114,1	100,0	58,9	97,0	60,6
Муркаш	97,0	100,0	50,6	92,1	23,5
Октябрьски	97,6	100,0	41,6	96,4	65,0
Первомайски	94,0	100,0	7,5	56,4	56,8
Пăрачкав	82,0	109,0	8,3	48,5	34,4
Советски	97,6	76,4	45,8	99,1	47,6
Сĕнтĕр	98,4	97,5	58,4	102,3	87,9
Вăрмар	107,9	100,0	31,4	106,2	60,1
Çĕрпÿ	117,5	100,0	25,7	92,9	70,0
Шупашкар	100,0	100,0	21,8	100,1	53,2
Чкаловски	104,2	100,0	—	86,2	[illegible]
Чурачăк	95,8	100,0	14,8	96,3	27,1
Шăмăршă	68,2	80,4	1,3	17,8	30,0
Шăхасан	120,8	100,0	22,6	64,3	58,1
Çĕмĕрле	86,7	100,0	[illegible]	56,0	73,8
Етĕрне	102,1	109,0	45,0	105,3	74,3
Елчĕк	104,1	100,0	21,7	50,3	67,8
Тăвай	101,2	100,0	35,1	77,5	50,7
Шупашкар хули	145,2	100,0	133,3	124,7	98,6

Лаша—колхозри тĕп туртăм вăйĕ

КАЛИНИНО. «Искра» колхозра (председателĕ коммунист М. Быков) пĕтĕмпе 30 ĕç лаши. Вĕсем пурте вăтам самăр. 1-мĕш бригадăри А. Ямщиков, П. Соловьев тата А. Титов конюхсем хăйсене çирĕплетсе панă лашасене уйрăмănах лайăх пăхаççĕ: вăхăтра апат параççĕ, шăвараççĕ, хырчăкласа тасатаççĕ. Анчах 2-мĕш бригадăри конюх М. Степанов хăйне çирĕплетсе панă 9 лашана начар пăхать. Вăхăтра апат памасть. Тепĕр чухне хăнана никамран ыйтмасăрах каять те лашасем вара кунĕпех выçă тăраççĕ. Çапла пулни те, ăна никам та чармасть.

Халĕ колхозра ĕç лашисене, çураки вăхăтĕнче ан ывăнччăр тесе, самăрлатма лайăх апат çине тăратнă.

Кунта туртăм вăйне нумайлатас тесе, 3 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Ку ĕçре Н. Харитонов колхозник тăрăшса ĕçленĕ. Колхозниксем вăкăрсемпе çураки вăхăтĕнче уйхире вăрлăх турттарма шутлаççĕ.

Бор. ШОРНИКОВ.

Колхоз полевочĕсемпе животновочĕсем пулма пĕр миллион та пилĕкçĕр çын хатĕрленĕ

Колхозсенче хĕллехи вĕренÿ вĕçленсе пырать. Агрономсем, зоотехниксем иртсе пынипе темиçе çĕр пин колхозникпе колхозницăна хирсене чи лайăх майсеме ĕçлесе хатĕрлеме вĕреннĕ, вăйлă тыррпул туса илмелли меслетсемпе паллашнă тата выльăх-чĕрлĕхе наука кăтартнă пек пăхса усрама вĕреннĕ. Çавăн чухлĕ халăха вĕрентме икĕ эрнелĕх курссем, çичĕ кунлăх семинарсем иртгернĕ, кружоксем тунă. РСФСР-ти колхозсенче çапла майпа миллион çурă çынна вĕрентсе кăларнă. Звеньевойсем пулса ĕçлеме 300 пин çынна хатĕрленĕ, колхоз животновочĕсем (ферма заведующийĕсем, бригадирсем, дояркăсем, конюхсем) пулса ĕçлеме 200 пин çынна вĕрентсе кăларнă. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

„1941 çулта нимĕçсем Одесса патĕнче вырăссем мĕн тери хытă хирĕç тăнине курчĕç. 1944 çулта вĕсем унта вырăссен наступленин хăватне туйса илчĕç"

Хĕрлĕ Çар Одесса хулине йышăнни çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар Одесса хулине йышăнни çинчен Лондонри радио савăнса пĕлтерет. Совет çарĕсен çав çĕнтерĕвĕ çинчен калакан хыпара вăл темиçе хутчен те тĕрлĕ чĕлхепе каласа панă. Хĕрлĕ Çарăн часĕсем, тенĕ пĕр радиопередачăра, Одессăна çĕнтерсе пырса кĕчĕç, çав пысăк хулари халăха ирĕке кăларчĕç, çапла вĕсем Кавказра пуçланнă калама çук вăйлă наступлени çулĕ çинче çĕнĕ çĕнтерÿ турĕç. Вырăссем пурте хăйсен çарĕ çĕнтернипе савăнаççĕ.

Лондонри радио тепĕр радиопередачăра совет çарĕсем Одессăна 1941 çулта мĕн тери хытă хÿтĕленине аса илтерет. Гитлеровецсем, питĕ пысăк çухатусем тÿссе, çав хулана икĕ уйăх ытла хупăрласа тăчĕç. Çав хулана хÿтĕленĕ паттăр гарнизон унтан чакма приказ илсен кăна вĕсем Одессăна пырса кĕме пултарчĕç. Халĕ Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Одесса хулине темиçе кун хушшинчех туртса илчĕç. «1941 çулта, — тенĕ радиопередачăра,— нимĕçсем Одесса патĕнче вырăссем мĕн тери хытă хирĕç тăнине курчĕç, 1944 çулта вĕсем унта вырăссен наступленийĕн хăватне туйса илчĕç».

Лондонри радио Одесса хулине йышăннă Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ стратегипе политика енчен питĕ паха çĕнтерÿ пулнине палăртать.

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англире паян тухнă хаçатсем Одесса хулине йышăннине ырласа саламлаççĕ. Малиновский генерал Одесса хулине пĕр кун хушшинчех йышăнни çак вăрçăра совет çарĕсем тунă чи пысăк çĕнтерÿсенчен пĕри пулса тăрать, теççĕ. Хаçатсем çакна палăртса параççĕ: Одесса хулине ирĕке кăларнă хыççăн халь Германин Крымри çарĕсене пĕтерсе тăкаççех ĕнтĕ е вĕсен парăнмалла пулать, теççĕ.

«Дейли мэйл» хаçат çапла çырать: «Вырăссен стратегине шухăшласа тунă çынсемпе танлаштарсан, нимĕçсем халь питĕ сахал пĕлекен çынсем пек туйăнаççĕ», тет.

Румынсем çинчен калас пулсан, тет хаçат, «вĕсем тунă ĕçсене шута илсен, вĕсем тĕлĕшпе вырăссем сăмах панă пек тĕрĕс пулма кирлĕ те мар пек», тет.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Одесса хулине портне тытса илсе çĕнĕрен чаплă çĕнтерÿ туни çинчен Америкăри радио нумай калать. Нью-Йоркри радион комментаторĕ Филипп Баррес хăйне итлекенсене çапла каланă: «Хамăр çĕршыври хаклă çынсем! Вырăссем Одессăна йышăнни питĕ чаплă çĕнтерÿ пулса тăрать, вăл Украинăри кампание вĕçлеме пулăшать», тенĕ. Комментатор шухăшĕпе, Хĕрлĕ Çар Одесса хулине йышăнни Германин Крымра тăракан çарĕсен, çавăн пекех тата Румынине чакса пыракан çарĕсен лару-тăрăвне питĕ начарлатать.

АЛЖИР, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио обозревателĕ çапла калать: Одессăна йышăннă Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвне Француз халăхĕ савăнса саламлать. Обозреватель каланă тăрăх, Хĕрлĕ Çарăн çак çĕнĕ çĕнтерĕвне пула нимĕçсемпе румынсен шухăш-кăмăлĕ нумай пусăрăнĕ.

„Халлапри пек паттăр вырăс салтакĕсене тăшман тытса чараймасть"

КАНАДĂРИ ХАÇАТСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРĂН ÇĔНĔ ЧАПЛА ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН

ОТТАВА, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăри мĕнпур хаçатсем Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсене, Совет çарĕсем Чехословаки чиккине тухнине тата Одесса хулине ирĕке кăларнине пысăка хурса хаклаççĕ. Хаçатсем пурте пĕррехмĕш страницăсенче фронтри хыпарсене тата Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. В. Сталин панă приказсене пысăк заголовоксемпе çырса пĕлтереççĕ. Çав заголовоксенче вĕсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем мĕн тери паха пулнине тата вăл питĕ вăйлăн наступлени туса пынине палăртаççĕ.

Канадăри пысăк хаçатсем чылайĕшĕ совет çарĕсен çĕнтерÿсем çинчен калакан пĕлтерÿсене пичетленипе пĕрлех çав çĕнтерÿсем çинчен мухтаса çырнă статьясем те пичетлеççĕ. Оттавăра тухакан «Джорнэл» хаçат хăйĕн умстатйинче çапла çырать: халлапри пек паттăр вырăс салтакĕсене тăшман тытса чараймасть. Çав салтаксем, снабжени йывăрлăхĕсемпе пыв-шура çĕнтерсе, пĕр чарăнмасăр вăйлăн наступлени туса пыраççĕ, Германин укрепленийĕсене çĕмĕрсе пыраççĕ».

Америкăн Англири тип çĕр çинчи çарĕсен командующийĕ калани

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 11-мĕшĕ (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн Англири тип çĕр çинчи çарĕсен командующийĕ Брэдли генерал-лейтенант Европăна кĕрсе кайма хатĕрленекен американец офицерĕсен пухăвĕнче сăмах тухса каланă. Европăна кĕрсе кайнă чухне союзниксен çарĕсен питех те пысăк çухатусем тÿсмелле пулать тенинчен Брэдли кулнă.

Вăл çапла каланă: «Вăрçă ăнăçлăн пĕтесси çав операцирен килет. Вăл операци мĕнле вĕçленесси пирки эпĕ пĕртте хăрамастăп. Вăхăт çитсен, эсир хамăр карапсен вутçулăмĕ питĕ вăйлинчен тата хамăр авиаци çав тери хăватлă пулнинчен тĕлĕнсех кайăр»,—тенĕ. Брэдли офицерсене çапла чĕнсе каланă: «Эсир салтаксене тĕрĕс шухăш-кăмăллă пулма вĕрентĕр», — тенĕ. Унтан вăл çапла каланă: «Сирĕн юлашки патрон пĕтиччен çапăçас пулать. Пирĕн салтаксем тăшман салтакĕсенчен нумай лайăхрах, пирĕн хĕçпăшал та тăшман хĕçпăшалĕнчен лайăхрах. Пирĕн çарпа хĕçпăшал тăшман çарĕпе хĕçпăшалĕнчен нумай ытларах. Ун чухлĕ çарпа хĕçпăшал тытма нимĕçсем нихăçан та шухăшлама та пултараймăн. Эсир ăна çапăçусем пуçлансан темиçе кунтанах хăвăр куçăрсемпе курсах çирĕп ĕненĕр», — тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПАННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй пĕлтернĕ тăрăх, йывăр бомбардировщиксен питĕ пысăк соединенийĕсем ĕнер кăнтăрла, темĕн чухлĕ истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Ошерслебенри тата Бернбургри авиаци завочĕсене, Ростокпа Арнимсвальдри промышленность объекчĕсене те вăйлă тапаннă. Çак операцире 2.000 самолета яхăн пулнă.

Тĕп задание пурнăçа кĕртнĕ хыççăн истребительсен пĕр пайĕ тăшман аэродромĕсене атакăланă, аэродромсенчи самолетсене пулеметпа пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Сывлăшра пулса иртнĕ йышлă çапăçусенче нимĕçсен 126 самолетне персе ÿкернĕ. Союзниксен 80 самолет пĕтнĕ.

Апрелĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Аахена йышлăн вĕçсе кайса тапаннă. Çавăн пекех тата Ганновер хулипе Хĕвеланăç Германири ытти хуласем çине те бомбăсем пăрахнă.

ФРАНЦИРИ ПАРТИЗАНСЕН ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

БРАЗЗАВИЛЬ, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильти радио çапла пĕлтерет: Çурçĕр Францире кĕрешекен партизансем юлашки çур çул хушшинче нимĕçсен çар хатĕрĕсем турттарса пынă 183 эшелонне тата салтаксем турттарса пынă 29 эшелонне ÿпĕнтерсе янă, 357 локомотив пĕтерсе тăкнă, 13 шлюз ишсе антарнă, тавар тиенĕ 1.700 вагона пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен хĕçпăшаллă 18 отрядне аркатса тăкнă, телеграф çыхăнăвĕн 26 центрне тапаннă, нимĕçсен 18 складне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех партизансем штабсенче ĕçлекен 19 нимĕç офицерне, 2 нимĕç генералне тата оккупантсем майлă пулса ĕçлекен 80 французa вĕлернĕ.

ВИКТОР-ЭММАНУИЛ КОРОЛЬ УМБЕРТО ПРИНЦА ИТАЛИ ПРАВИТЕЛĔ ТУСА ХУНИ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Виктор-Эммануил король Итали халăхне радиопа çапла каланă: союзниксен власĕсене тата хамăр правительствăна сĕннипе пурнăçа кĕртес шутпа эпĕ общество ĕçĕсенчен пăрăнма тата хамăн ывăлăма Пьо Монтский принца (Умберто принца) королевство правительне лартма шут тытрăм. Çак ĕç союзниксен çарĕсем Рима кĕрсе кайнă кун влаçа официальнăй йĕркепе панă хыççăн законлă пулса тăрать. Çак решени, ман шутпа, кирлĕ пĕрлĕхлĕ пулма пулăшĕ, вăл манăн татăклă йышăннă решени пулса тăрать»

ВЕНГРИ ХАЛĂХĔ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ХИРĔÇ ТĂРАТЬ

АЛЖИР, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио çапла пĕлтерет: Венгри халăхĕн тĕрлĕ сийĕсем Германи оккупанчĕсене ытларах та ытларах кураймн пулса пыраççĕ. Добрецен хулинчи университетри студентсене укрепленисемпе стратегиллĕ çулсем тума гитлеровецсен Тодт ятлă организацине (çар строительствин организацине) мобилизацилеме пулнă. Вĕсене мобилизаци пункчĕсене пыма приказ панă. Анчах та студентсен пĕр ушкăнĕ университет канцелярине кĕрсе кайнă та мобилизациленĕ студентсен списокĕсене пурне те çунтарса янă, вара хăйсем вăрмана тарса пытаннă.

Гитлеровецсем Венгрие темĕн пек хыпаланса çаратаççĕ. Венгрири апат-çимĕçпе чĕртавара хăвăртрах Германие ăсатма тăрăшаççĕ. Гитлер командованийĕн приказĕ тăрăх, нумаях пулмасть Венгри банкĕсенчен халăх укçи-тенкипе пĕтĕмĕшпех ярса илмелле тунă. Будапештри банксенчен гитлеровецсем 50 миллион пенгие яхăн туртса илнĕ. Ку укçа нимĕçсене Германин Венгрири оккупаци çарне тытса тăма кирлĕ пулнă.

БУДАПЕШТРА ЛАРУ-ТĂРУ ÇИВĔЧЛЕНСЕ ÇИТНĔ

СТАМБУЛ, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, Будапештра юлашки кунсенче хумханусем пулса иртнĕ. Çавăн пирки полици влаçĕсем пур театрсемпе киносене те тата халăх курма çÿрекен ытти предприятисене те хупнă. Хуларa кирек-мĕнле пухусем тума та чарса лартнă. Урамсенче эсэсовецсен вăйлатнă отрячĕсем патрульлесе çÿреççĕ.

ИСПАНЕЦСЕМ ТАНЖЕРТА АМЕРИКАНЕЦСЕН НЕФТЬНЕ ТЫТСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Нью-Йоркран çапла пĕлтерет:

«Вăрçă информацийĕн бюровĕ Португалири радио апрелĕн 8-мĕшĕнче каçхине çакăн пек хыпар пачĕ тесе пĕлтерет: «Испани влаçĕсем Танжерта «Шелл» тата «Вакуум Ойл» компанийĕсем янă нефть запасне тытса илнĕ те испанецсен компанине панă».

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăваш АССР-ĕн Наркомсобесĕ пур инвалидсене те çакăн çинчен пĕлтерет: Канашри протез мастерскойĕн виçекен техникĕ Наркомсобесра кашни уйăхрах уйăхăн виççĕмĕш кунĕнче кунĕпех, тăваттăмĕш кунĕнче 12 сехетчен ĕçлет. 2—1.

Çураки тĕлне мăнтăр та вăйлă лашасем хатĕрлер

Çуракине ăнăçлăн иртгересси колхозсенчи лашасене çураки ĕçсене тума лайăх хатĕрленинчен тата вĕсемпе тĕрĕс усă курнинчен килет. Малта пыракан колхозсем туртăм вăйне çураки тĕлне хатĕрлеме тахçанах тытăннă ĕнтĕ.

Çапла, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра январь пуçламăшĕнчех лашасемпе ĕçлекенсен составне тепĕр хут тĕрĕслесе тухнă. Лашасене конюхсем çумне çирĕплетнĕ. Çавăн хыççăн обезличкăна пĕтернипе пахалăхĕ часах палăрнă. 82 ĕç лашинчен 6-шĕ кăна вăтамран каярах ÿт-тирлĕ, ыттисем пурте лайăх ÿт-тирлĕ. Лашасене ĕçрен хăтарса лайăхрах апат çине тăратнă.

Сĕнтĕр районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан тата «Çĕнĕ Юнкă» колхозсенче те лашасене лайăх пăхаççĕ. Унта лашасем пурте самăр, вăйлă. Лашасем ĕрчетмелли плана кашни çулах тултараççĕ, тихасене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл çитĕнтереççĕ. Лашасем чирленĕ тĕслĕхсем пачах пулман.

Калинино, Шупашкар, Элĕк тата Сĕнтĕр районĕсем 1943 çулта лашасем ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă. Сĕнтĕр районĕнче иртнĕ çулта кашни кĕсре пуçне 60,7 тиха çитĕнтернĕ, çапла вара тихасене ÿстермелли плана 149 процент тултарнă. Çак районри Буденный ячĕпе тăракан колхозра иртнĕ çул 17 кĕсререн 17 тиха çитĕнтернĕ. Вăрçă пуçланнăранпа çак колхоз кÿршĕри колхозсене åратлă 11 айăр сутнă тата Хĕрлĕ Çара 45 лаша панă. Элĕк районĕнчи «Труд» колхозра 26 кĕсререн 26 тиха çитĕнтернĕ. Çакăн пек тĕслĕхсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Анчах, пĕтĕм республикипе илсен, лашасене пăхас тата вĕсене ĕрчетес ĕçсем ытти выльăхсемпе танлаштарсан нумай юлса пырать-ха. Лашасем ĕрчетес тата вĕсене пăхас ĕçсем начар пулса пынин сăлтавне чăн малтанах çак питех те ответлă ыйтусем çине колхозсемпе районсен руководителĕсем ситилĕксĕр савăрăнса пăхнинче шырамалла.

Хăшпĕр районсенче ку тарана çитсе те колхозсемпе совхозсенче лашасен шутне ÿстерессн тата вĕсене пăхас ĕçе лайăхлатасси çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртессишĕн ситилĕксĕр кĕрешеççĕ-ха. Чылай колхозсенче лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçре обезличкăна пĕтермен.

Чкаловски районри Крупская, Роза Люксембург тата ытти хăшпĕр колхозсенче лашасене çак вăхăта çитсе те вĕсемпе ялан ĕçлекенсем (ездовойсем) çумне çирĕплетмен. Çĕмĕрле районĕнчи «Вперед» колхозра вара лашасене ячĕшĕн çеç уйрăм çынсем çумне çирĕплетнĕ, ĕнентерекен хутсем те панă. Анчах лашасемпе кирек хăш колхозник те усă курать.

Чылай колхозсенче лашасене чунсăрран пăхаççĕ. Чкаловски районри Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕ Сергеев вăрман турттарма панă лашапа хăйĕн ĕçĕсене туса çÿренĕ, лашана çитерме панă çĕлле сутнă, лашана хĕнесе сурапплатса пĕтернĕ. Советски районри Энгельс ячĕпе тăракан колхозăн бригадирĕ Муськов, Вăрнартан таврăннă чухне, ывăннă лашана хире пăрахса хăварнă та ăна унта кашкăрсем çурса тăкнă.

Колхозсен хăшпĕр руководителĕсем лашасем çине чунсăррăн, ответсăррăн пăхнине пула, лашасем вилнĕ тĕслĕхсем те пур. Ишлей районĕнчи «Прожектор» колхозра 4 лаша, «Сталинград» колхозра 7 лаша, Вăрмар районĕнчи «Трактор» колхозра 3 лаша вилнĕ. Канаш, Тăвай, Кувакино тата ытти хăшпĕр районсенче те лашасем чылай вилнĕ.

Чылай çĕрте лаша кăрчанкипе ситилĕклĕ кĕрешмеççĕ, çак хăрушă чир саралса каяс хăрушлăха туйса ĕçлемеççĕ. Кăрчанкă чирĕ лашасене вăйсăрлатать, начарлатать тата вĕлерме те пултарать. Кăçал Чкаловски районри «Правда» колхозра кăрчанкăпа чирлесе 2 лаша вилнĕ.

Çак тĕслĕхсем асăннă районсенчи руководительсем ку тĕлĕшпе пикенсе ĕçлеменнине кăтартаççĕ. Вĕсем пĕр хумханмасăрах вилнĕ лашасем пирки акт çыраççĕ, çав лашасене шутран кăлараççĕ те лăпланса лараççĕ. Çакăн пек ĕçлесен лашасемшĕн кĕрешме мобилизацилеме пулать-и-ха вара?

Иртнĕ çул пирĕн республикăри колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана 65,5 процент кăна пурнăçланă. Çавăнпа та кăçал çураки вăхăтĕнче лашасемпе тумалли ĕçсем иртнĕ çулхинчен ытларах пуласси районсемпе колхозсен руководителĕсен ăнланса илме вăхăт ĕнтĕ. Çураки çарт хыçĕнче мар. Кашни колхозрах зоотехникăпа ветеринари енчен лашасене пăхса тухмалла та вăйсăррисене халех вăйлă апат парса, кантарма тăратмалла.

Лашасемпе колхоз ĕçĕнче ытларах усă курас шутпа, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ вырăнти организацисене Оборонăн Государственнăй Комитечĕ ирĕк памасăр лашасене ытти ĕçе мобилизацилеме чарчĕ. Колхоз лашисене законсăр ĕçе мобилизациленĕшĕн ответлă çынсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттарма хушнă. Çураки пуçланичен пĕр уйăх маларах колхозсенчи мĕнпур лашасене йывăр ĕçрен хăтармалла. Лашасемпе хуçалăхри ĕçсенче сахалтарах усă курмалла. Çураки вăхăчĕ валли ситилĕклĕ таранах утă, сĕлĕ тата ытти апатсем те хатĕрлемелле. Уйри ĕçсем пуçланичен виçĕ эрне малтан мĕнпур лашасене кантарма тăратмалла.

Мĕнпур колхозсенче лаша апачĕсене тĕрлĕ майпа хатĕрлесе (пăтратса, вĕри шывпа пĕçерсе, улăма вакласа, сĕлтĕпе çемçетсе т. ыт.) çитерме тытăнмалла. Выльăх апачĕ çитмен колхозсем кÿршĕри колхозсенчен е тата колхозниксенчен кивçен илессипе, ытти майсемпе тупассипе анлăн сарса ямалла. Выльăх апачĕсене мĕнле расходланине куллен тĕрĕслесе тămалла.

Ĕç вăхăтĕнче лайăх ÿт-тирлĕ лашасене куннe 2-шер сехет хушши 2 хутчен кантармалла, вăйсăртарах тата тиха ĕмĕртекен кĕсресене виçĕ хутчен кантармалла. Кашни 50 минут ĕçленĕ хыççăнах лашасене 10 минут хушши кантармалла. Çав вăхăтра лашасене тĕрĕслемелле: кăкăрне сÿсмен тивмен-и е тата ытти тĕлтен суранланман-и? Ут тавраш ĕçсене яланах сăнаса тămалла. Ут тавраш ĕçсене урапасене халех тĕплĕн хатĕрлес пулать, кашни лаша валли хăйне виçеллĕ хăмăт-ĕнерчĕк пултăр.

Вăрçă кунĕсенче лашасене пăхас ĕçе çамрăксемпе хĕрарăмсем йышлăн хутшăнчĕç. Вĕсене зоотехника тата ветеринари правилисемпе паллаштарас пулать. Витере çирĕп йĕркеллĕх пулмалла. Конюхсене ĕç кунĕсем лашасен самăрлăхне шута илсе тÿлемелле. Пĕтĕ кĕсресене пăхасси çине уйрăмах тимлĕн савăрăнса пăхмалла. Хăм пăрахни нихăш колхозра та пулмалла мар.

Кăçал уйхир ĕçĕсенче майракаллă шултăра выльăхсемпе анлăн усă курма тивет. Чылай районсенче вĕсемпе усă кураççĕ те ĕнтĕ. Елчĕк районĕнче, сăмахран, 418 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Çав районри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 16 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Вĕсемпе хатĕрлев пунктне 560 центнер çĕрулми, 22 центнер тĕштырă леснĕ. Выльăхсен витине тума 50 кубометр йывăç турттарнă. «Комбайн», «Коммунар» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенче те вăкăрсемпе ĕçре ăнăçлăн усă кураççĕ. Шăхасан районĕнчи колхозсенче 319 вăкăра, Канаш районĕнче 341 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ.

Анчах Йĕпреç, Советски, Сĕнтĕр тата ытти хăшпĕр районсенче вăкăрсене ĕçе вĕрентесси пачах ситилĕксĕр пырать-ха. Вăкăрсене ĕçе вĕрентес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлеме тытăнмалла, колхозсенчи вăкăрсене кăна мар, колхозниксен ĕнисемпе вăкăрĕсене те вĕрентмелле. Вĕсем валли хăмăтсем тата кÿлсе çÿремелли ытти хатĕрсене те ситилĕклĕ чухлĕх туса хумалла.

А. МИТРОФАНОВА.

ВКП(б) Обкомĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçленен отдел заведующийĕн заместителĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00414. Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.